27-мěш çул тухать. Хакě 20 пус.

1944
АПРЕЛЬ
23
ВЫРСАРНИКУН
31 (6576) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Вăйлă тырпулшăн кĕрешесси — ялти çамрăксен патриотла тивĕçĕ

Ялхуçалăх ĕçĕсенче кăçал та, иртнĕ çулсенчи пекех, çамрăксем пысăк вăй пулса тăраççĕ. Комсомолăн ялсенчи организацийĕсен хисеплĕ задачи—мĕнпур çамрăксене СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планне ăнăçлă пурнăçа кĕртессишĕн, выльăх-чĕрлĕх йышне тата унăн тухăçлăхне ÿстерессишĕн кĕрешме мобилизацилесси пулса тăрать.

Пирĕн тăван республика иртнĕ çулта тухăçлă тырпул туса илнĕшĕн пысăк награда — Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илчĕ. Республикăри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тата государство умĕнчи обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕç. Çак ĕçсенче ялти çамрăксем хайсен хисеплĕ вырăнне йышăнчĕç. Комсомолăн Вăрнар районĕнчи организацийе — ВЛКСМ Центральный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне, Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозри тата Елчĕк МТС-ĕнчи пуçламĕш организацисене—ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотисене панă. Çак чаплă наградӑсем республика çамрăкĕсене çĕнĕ вăйхăват хушса парĕç.

Комсомолăн нумай организацийĕсем республикăри колхозсемпе МТС-сене çуракине хатĕрлес тĕлĕшпе вăя шеллемесĕр ĕçлерĕç.

Анчах хатĕрленÿ ĕçĕ вăл—вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешĕвĕн пуçламĕш тапхăрĕ çеç-ха. **Тухăçлă тырпулăн никĕсне çуракинче хываççĕ.** Халь шăпах çав хĕрÿллĕ кунсем çитрĕç. Республикăри чылай колхозсем уйхир ĕçĕсене пуçăнчĕç: калчасене апат параççĕ, клевер акаççĕ, кĕрхи çĕртме туса хăварнă лаптăксене сÿрелеççĕ, суха тăваççĕ. Вăрнар районĕнчи комсомолецсемпе çамрăксен вăйлă тырпулшăн кĕрешекен звенисем хире тухрĕç. Çав районри Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра комсомолец Павел Вернов ертсе пыракан звено кăçал 3 гектар тулă, гектар çурă пăрçа акса тумалла. Çав лаптăксем çине звено членĕсем хĕллех выранти удобренисем чылай тăкнă. Апрелĕн 21-мĕшĕнче вĕсем çав участоксене çумкурăксемпе хăмăлсенчен тасатрĕç. 3 гектар çинчи кĕрхи тулă калчине тислĕк шывĕпе апат пачĕç.

Анчах, тÿрех калас пулать, комсомолăн республикăри чылай районсемпе колхозсенчи тата МТС-сенчи организацийĕсем начар ĕçлеççĕ-ха.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XII-мĕш пленумĕ комсомолăн ялсенче сывă вăхăтра тумалли ĕçĕсем çинчен сÿтсе яврĕ, ялти çамрăксене колхозсен тата МТС-сен ĕçĕсене активлăн хутшăнтармалли, комсомол организацийĕсене йĕркелĕх тĕлĕшĕнчен çирĕплетмелли мероприятисене палăртса хăварчĕ. Пленум **комсомолăн хальхи ĕçĕ—ялти çамрăксене çуракине кĕске срокра тата лайăх пахалăхпа ирттерме мобилизацилесси** пулать, тесе кăтартса пачĕ. Анчах комсомолăн республикăри организацийĕ пленум решенийĕсене пурнăçлассишĕн начар ситлексĕр кĕрешет-ха.

Мĕнпур çамрăксене вăйлă тырпулшăн кĕрешме активлăн мобилизацилес тесен, чи малтанах, комсомолăн колхозсемпе МТС-сенчи пуçламĕш организацийĕсен ĕçĕсене лайăхлатмалла. Çавăнпа та ВЛКСМ Обкомĕпе райкомсен пуçламĕш организацисене ертсе пырас ĕçе чăтăклăрах вăйлатас пулать. Пуçламĕш организацисен секретарĕсене кулленхи ĕçре пулăшасси, вĕсен политикăлла пĕлĕвне ÿстерсе пырасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Канцелярлăхчен бюрократла ертсе пырас меслете тата решенисене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесси çине, кадрсем суйласа илесси çине çиелтен пăхассине тĕпренех пĕтермелле. Колхозсемпе МТС-сенчи пуçламĕш организацисене малта пыракан çамрăксене комсомола явăçтарнипе çирĕплетсе пымалла. ВЛКСМ Центральный Комитечĕн пленумĕ кашни колхозрах, тракторнăй бригадăра комсомол организацийĕсем тума хушрĕ. Ку кăтартăва çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымалла.

Комсомолпа ялти çамрăксем хушшинчи çыхăнăва тĕреклетмелли тĕп майсенчен пĕри вăл—политикăлла-массăлла ĕçе анлăн сарса пыни пулать. Акă мĕншĕн комсомол организацийĕсен политикăлла-массăлла ĕçе пур майсемпе те вăйлатса пыма тăрăшмалла. Вулав çурчĕсемпе колхозсенчи клубсем, культура çурчĕсем, библиотекăсем,—çаксем пулмалла та ĕнтĕ культурăлла ĕçĕн тĕп центрĕсем. Вĕсенче ĕçлеме малта пыракан комсомолецсене лартмалла. Агитаторсемпе калаçу иртерекенсен, докладчиксен пĕлĕвне ÿстерсех пымалла, вĕсем валли кирлĕ литературăсем çителĕклĕ туса памалла.

Çĕршывра çуракине кăтартуллăн иртерессишĕн мĕнпур колхозсен, бригадăсен, звеносен, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсен социализмлă ăмăртăмĕ хăватлăн сарăлса кайрĕ. Çак ăмăртăва пуçараканĕсен—Калинин облаçĕнчи Краснохолмски районри «Красный Путиловец» ялхуçалăх артелĕн членĕсен — чĕнĕвне комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕсенче сÿтсе явмалла. Çапла тăвас пулать: **республикăри пĕр çамрăк та ăмăрту тулашĕнче ан юлтăр, кашниех конкретнăй обязательство илтĕр, ăна чыслăн пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрештĕр, ăмăртура малта пытăр.**

Ялти кашни çамрăк çуракин чи ответлă участокĕсенче—сÿрелени, сухалани, акнă çĕрте—хăйĕн ĕçченлĕхĕпе пултарулăхне кăтартса пама тивĕçлĕ. Партипе правительство уйхир ĕçĕсен пахалăхĕшĕн кĕрешесси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхма хушрĕç. Ял çамрăкĕ, эсĕ тухăçлă ĕçленипе пĕрлех, уйхир ĕçĕсен пахалăхĕ çине тимлĕн çавăрăнса пăх, юлташун ĕçне те тĕрĕсле—вăл агротехника правилисене пăсмасть-и?

Уйхир ĕçĕсене вăхăтра пуçăнни тăпрара нÿрлĕх ытларах упраса хăварма, суртыррисене вăхăтра акса хăварма май парать. Хăшпĕр колхозсенче уйрăм лаптăксем писсе çитнĕ пулин те, пĕтĕм хир юртан тасалса çитиччен сурхи ĕçсене пуçăнмаççĕ. Çакă вăл йăнăш. Суракп ĕçĕсене вăхăтра пуçăнассишĕн санăн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшмалла.

Иртнĕ çулсенче чылай колхозсем ретлĕ сеялкăсемпе акара туллин усă кураймарĕç. Партипе правительство йышăннă постановлени сеялкăсене тухăçлăн ĕçлеттерме хушать. Сеялкăсене йĕркеллĕн ĕçлеттерессишĕн, акмалли нормăна тĕрĕс лартассишĕн кĕрешесси—санăн хисеплĕ тивĕçлĕхÿ.

Иртнĕ çул хăшпĕр колхозсем, хыпаланса акнă пирки, вăрлăха тăпрана лайăх витĕнтерсе хăвармасăр агротехникăна пăснă. Çакă вăл тырпул тухăçлăхне нумай чакарнă. Вăрлăха тăпрана лайăх витĕнтерсе хăварассишĕн, акмалли вăрлăха вăрласран е пытарса хăварасран сыхлассишĕн çине тăрса кĕрешесси — санăн чыслă ĕçÿ.

Акара лашапа тĕрĕс усă курни пахă. Ăна вăхăтра кантарас, апатлантарас пулать. Çакна тĕплĕн пурнăçласа пырсан кăна вăл сана нормăна ытлашшипех тултарса пыма пулăшĕ. **Лашасемшĕн лайăх хуçасем пек тăрăшасси** — каллех санăн тивĕçÿ. Конюхсем лашасене мĕнле пăхнине тăтăшах тĕрĕслесе тăрас пулать. Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсене пулăшма пултаруллă комсомолецсемпе çамрăксене уйăрмалла. Выльăх-чĕрлĕх апачĕпе тирпейсĕр усă куракансене тата выльăхсене чунсăррăн пăхнине хирĕç тăтăклăн кĕрешмелле.

МТС-сенче комсомолецсемпе çамрăксем йышлăн ĕçлеççĕ. ВЛКСМ райкомĕсен комсомолăн МТС-сенчи организацисен ĕçне вăйлатмалла. Кашни **çамрăк тракторист, прицепщикпе плугарь кулленхи нормăна тултарса пычăр.** Вĕсен ĕç опычĕ сахалтарах пулсан, вĕсене пулăшма, ĕçе хăнăхтарма опытлă трактористсене мобилизацилес пулать.

Комсомолецсемпе ялти çамрăксен ĕç вырăнĕ халь — **хирте.** Комсомол организацин секретарĕсен хăйсен пĕтĕм ĕçне вăйлă тырпулшăн пуçланнă кĕрешĕве уйхирте, суракинче ĕçлекенсем хушшинче, организацилесе пырас пулать. Колхозниксен хушшинчи агитаципллĕ-массăлла тата культурăлла-массăлла ĕçсене пихăçанхинчен те вăйлатмалла.

Партин ялсенчи организацийĕсен тата ялти коммунистсен çак задачăсене чыслăн пурнăçа кĕртме комсомолецсене большевикла пулăшса пымалла.

Парторганизацисем пулăшнипе ялти çамрăксем кăçал фронтпа тăван çĕршыв валли тырпул ытларах туса илессишĕн, Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне хамăр республикăрах хăварассишĕн кĕрешсе çĕнĕ çитĕнÿсем тăвĕç.

Ялти коммунистсемпе комсомолецсем, çуракине кăтартуллă иртерессишĕн социализмлă ăмăртăва вăйлăн сарса ярăр!

Республика уйхирĕсенче

ВĂРНАР, апрелĕн 22-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Çанталăк уяр тăнипе хирти юр хăвăрт кĕлет. Районри колхозсем тăпра юртан тасалса çитнĕ-çитменех клевер акаççĕ, кĕрхи калчасене апатлантараççĕ.

Паянхи кун тĕлне районĕпе 215 гектар çинчи кĕрхи калчасене апат панă тата 47 гектар клевер акнă.

Кĕрхи калчасене апатлантарас ĕçе «Советская деревня», Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан тата Санарпуçĕнчи «Красный Санар» колхозсем ăнăçлă тăваççĕ. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз икĕ кун хушшинче 90 гектар çинчи калчасене апатлантарчĕ.

Пур колхозсем те вăрлăхсене яровизацилеме тытăннă. Ĕнерхи кун тĕлне пурĕ 850 центнер çĕрулми яровизацилеме хунă, 1.500 центнер вăрлăха тĕрлĕ имçамсемпе чÿхенĕ.

Паян районри пур колхозсем те кĕрхи калчасене апат пама тытăнчĕç.

П. ОСИПОВ,
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

* * *

СОВЕТСКОЕ, апрелĕн 22-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри колхозсем пĕрин хыççăн теприн уйхир ĕçĕсене пуçăнаççĕ. Паянхи кун тĕлне 18 колхоз хĕрсех кĕрхи тырăсене апат парас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Икĕ кун хушшинче «Трудовик» колхоз 25 гектар, «Спутник колхозника» колхоз 27 гектар çинче апат пачĕç. Апрелĕн 21-мĕшĕ тĕлне районĕпе пурĕ 224 гектар çинчи кĕрхи тырăсене тислĕк шĕвекĕпе шăварнă.

Кунпа пĕрлех «Прогресс», «Крестьянская газета» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсем клевер акма тухрĕç. Вĕсем 30—35-шер гектар акрĕç те ĕнтĕ. Районĕпе пурĕ 291 гектар акнă.

Районри пур колхозсенче те хире тухаччен ĕçсене тăваççĕ: вăрлăха яровизацилеççĕ, вăрлăхсене, ялхуçалăх инвентарĕсене, хăмăт-ĕнерчĕксене тепĕр хут тĕрĕслесе тухаççĕ.

Паян «Большевик» колхоз сухана тухрĕ. «Клевер» колхоз ĕнер кĕрхи çĕртме тунă лаптăксене сÿрелеме пуçларĕ.

Çураки ĕçĕсене кая хăварас мар тесе, колхозниксем тăпра пиçнине сăнаса тăраççĕ.

П. НИКИТИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ЭЛĔК, апрелĕн 22-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Çанталăк ăшăтнă май, колхозсен уйхирĕсенче сурхи ĕçсем пуçланчĕç. «Октябрь» колхоз 15 гектар, «1-ое мая» колхоз 12 гектар, Жданов ячĕпе тăракан колхоз 24 гектар, Киров ячĕпе тăракан колхоз 15 гектар çине клевер акрĕç. Ĕнерхи куна пĕтĕмле 133,5 гектар клевер акнă.

Чылай колхозсенче кĕр калчисене апат пама тата çĕрулмисене яровизацилеме тытăнчĕç. Горький ячĕпе тăракан колхоз членĕсем юр айĕнчен начартарах тухнă кĕр калчисене 5 гектар çине кайăк-кĕшĕк тислĕкĕн шывĕпе апатлантарчĕç. «Светлый путь» колхоз та 6 гектар çинчи калчасене апатлантарчĕ.

Х. ЛИСИН.

1.200 гектар çинчи кĕрхи тырăсене апат панă

ВĂРМАР, апрелĕн 22-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Тырпул тухăçлăхне ÿстерессишĕн кĕрешнĕ çĕрте кĕрхи калчасене апат пани пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем çакна пĕр кунлăха та манмаççĕ. Юр айĕнчен тухнă калчасене çийĕнчех минераллă удобренисемпе, тислĕк тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕн шĕвекĕпе апатлантараççĕ. Малта пыракан «Дружба» колхоз 350 гектар çинчи кĕрхи тырăсене суперфосфатпа тата фосфорит çăнăхĕпе апатлантарчĕ те ĕнтĕ.

«Дружба» колхозăн председателĕ коммунист И. Г. Григорьев юлташ кĕрхи калчасене апатлантарнин уссине лайăх ăнланса илнĕ. Вăл председатель пулса ĕçлеме тытăначчен ку колхоз вис-тăватă çул хушши тăтăшах пĕчĕк тухăçлă тырпул тăва-тăва илнĕ.

Иртнĕ çуракине хатĕрленнĕ май, Григорьев юлташ колхозниксемпе колхозницăсене Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозра экскурсие илсе кайнă. Вĕсем унта вăйлă тырпулшăн кĕрешмелли майсемпе паллашнă.

Кольцовкăран таврăнсан, колхозниксем тухăçлă тырпул туса илесси çинчен сÿтсе-явма ятарласа пуху пухнă. Çав пухура вĕсене агроном кĕрхи калчасене апатлантарма сĕнÿ панă. «Дружба» колхоз членĕсем иртнĕ çуркунне 420 гектар çинчи кĕрхи калчасене апат панă, ун хыççăн вара калчасем калама çук вăйланнă. Апат панин усси уйрăмах кĕркунне яр-уççăн палăрнă: колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 100-шер пăт тырă пуçса кĕртнĕ. А. Н. Кируш юлташ ертсе пыракан бригада вара кашни гектартан 150—180-шар пăт тырă туса илнĕ.

Кĕрхи калчасене апат парас тĕлĕшпе халь ку колхозра кунсерен 200-шер çын ĕçлет. Вĕсем ĕçе ирхине 3 сехетре тухаççĕ. Калчасене апатлантармалли минераллă удобренисене тата кĕл шĕвекне хайсемех пĕчĕк çунашкасемпе е ача урапиисемпе турта-турта тухаççĕ.

Минераллă удобрени вĕсем хĕллех 2.500 центнер турттарса хатĕрленĕ.

Çавăн пекех Паттири «Заря» колхоз 30 гектар, «Хĕрлĕ Мăрат» колхоз 40 гектар, «Новая жизнь» колхоз 60 гектар çинче кĕрхи тырăсене апатлантарнă. Ку ĕçе районĕпе пурĕ 1.200 гектар çинче тунă.

Районри пур колхозсем те хĕрсех клевер акаççĕ. Паянхи кун тĕлне пурĕ 300 гектар акнă. «Новая жизнь», «Хĕрлĕ Шăхаль», «Хĕрлĕ Кĕтне» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсем çитес кунсенчех клевер акса пĕтереççĕ.

«Новая жизнь» колхозра хăрса пĕтнĕ панулми пахчисене тепĕр хут чĕртме тытăнчĕç. Колхоз кăçал панулми йывăççисемпе çырла йывăççисем 3 гектар çине 10.000 тĕп лартса хăварасшăн. Панулми йывăççи сителĕклех—20.000 тĕп лартса хатĕрленĕ. 10.000 тĕпне ытти колхозсене сутма шутлаççĕ.

Тăпрари нÿрлĕхе ытларах упраса хăварас шутпа, çĕре кăпкалатас ĕçе сывă кунсенчех пуçăнаççĕ. Хăшпĕр колхозсем хирти тата итемсем çинчи çĕрĕк улăмсене тасатма тытăннă.

Калинин облаçĕнчи Краснохолмски районри «Красный путиловец» ялхуçалăх артелĕн членĕсен чĕнĕвĕ пичетленнĕ хыпарсем района çитеймен-ха. Вăйлă тырпулшăн кĕрешме Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилеме чĕнсе калаçнине колхозниксем радио тăрăх çеç илтнĕ. Краснохолмовецсен чĕнĕвне колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса пама ВКП(б) райкомĕ колхозсене районри парти активĕнчен 18 çынна кăларса ячĕ.

А. СМИРНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Çуракинче 4.000 гектар çинчи ĕçе тăватпăр

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, апрелĕн 22-мĕшĕ. (**Телефонпа**). МТС-ри кашни тракторист çуракине иртнĕ çулхинчен лайăхрах иртерес шухăшпа пурăнать. Тракторсене апрелĕн малтанхи кунĕсенчех юсаса хатĕрлерĕмĕр. Халĕ 23 трактортан 20-шĕ колхозсен хирĕнче, тепĕр 3 тракторпе те çак кунсенчех ăсататпăр.

Тракторсем валли горючи, чурккăсем тата сĕрмелли çусем çителĕклĕх хатĕрленĕ. Горючи 31 тонна пур. Çураки вăхăтĕнче чурккăсем 350 кубометр кирлĕ пулсан, эпир 810 кубометр хатĕрленĕ.

Колхозсен хирĕсенче 4 бригада ĕçлет. Кашни бригадăна икĕ пая уйăрнă, трактористсене техника енчен пулăшу пама пĕр автомашина çинче куçса çÿрекен мастерской турăмăр. Çамрăк трактористсене ĕçре яланах пулăшса пыма тата практикăлла хăнăху парас шутпа вĕсене асла трактористсем çумне çирĕплетрĕмĕр.

Трактористсене ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕсем çинчен» йышăннă постановленине тĕплĕн ăнлантарса панă хыççăн пĕрремĕш бригада (бригадирĕ Идинкин юлташ) çуракинче 800 гектар сухалас вырăнне 1.500 гектар сухалама обязательство илчĕ.

МТС коллективĕ çураки вăхăтĕнче 2.000 гектар сухалас вырăнне 4.000 гектар сухалама пулчĕ.

С. ШИРКАДИНОВ,
МТС директорĕ.

Вăйлă тырпул звенисем хире тухрĕç

ВĂРНАР, апрелĕн 22-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Комсомолец Павел Вернов Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра вăйлă тырпул звенине ертсе пырать. Звенора 10 çамрăк. Вĕсем пĕринчен теприн юлмаççĕ, тимлĕн ĕçлеççĕ.

Çак звенона пĕтĕмпе çичĕ гектар çурă çĕр участокĕ уйăрса панă. Çак çĕр çинче вĕсем 3 гектар тулă, гектар çурă пăрçа акаççĕ. Акмалли çĕре çемçетес тесе, вырăнти удобренисем чылай тăкнă.

Апрелĕн 21-мĕшĕнче кунта уйхир ĕçĕсем пуçланчĕç. Звено членĕсем пурте, уйхире тухса, çак участок çинчи çумкурăкĕсемпе ырăш хăмăлĕсене тасатрĕç. 3 гектар çинчи кĕрхи тулла малтанхи хут кайăк-кĕшĕк тата выльăх тислĕкĕн шĕвекĕпе апатлантарчĕç.

Комсомолка Василиса Степанова ертсе пыракан звено та («Победа» колхоз) уйхир ĕçĕсене тытăнчĕ. Вĕсем ĕнер 5 гектар çинчи кĕрхи калчасене тислĕк шывĕпе апатлантарчĕç.

Степанова юлташ звени кăçал 3 гектар çине тулă, 9 гектар çине сĕлĕ, 1 гектар çине вика, 1 гектар çине вир акса хăварать. Акма вăрлăхсем çителĕклĕх хатĕрленĕ.

А. БЕЛЯЕВ,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

„Иртсе кайсан—курмиш пул...“

Иртнĕ çулта Шупашкар районĕнчи уйрăм колхозсен çуракинче чылай пысăк ситменлĕхсем пулнă. Сăмахран, «Трудовик», «Заря», «Самолет», «Строитель», «Актив» колхозсем çуракине начар иртернĕ: сайра акнă, сухаланă чухнĕ шăйрăк хăварнă тата лайăх сÿрелемен. Çавпа пула вĕсем гектартан вăтам шутпа 7—8 центнер кăна тырпул пухса илнĕ.

Иртнĕ çулхи йăнăшсене кăçал урăх тумалла мар. Анчах та колхозсен хăшпĕр руководителĕсем, çав йăнăшсене вăхăтра тÿрлетес вырăнне, «иртсе кайсан—курмиш пул» тесе лараççĕ.

Районăн çуракине иртерме, пĕтĕмĕшпе илсен, вăрлăх çителĕклĕ. Çав вăхăтрах «Самолет», «Молния», «Заря», «Урожай» тата ытти хăшпĕр колхозсен 70-шер центнер вăрлăх çитмест. Çапах та вăрлăх улăштарас, вăрлăха сутăн е кивçен илес ĕçе районра çителĕксĕр организациленĕ. Вăрлăх сортлас ĕçе те вĕçлемен-ха.

Районри колхозсенче туртăм вăйне çураки валли лайăх хатĕрленĕ теме çук. Çураки вăхăтĕнче кашни лашапа 8—9-шар гектар таран сухалама тивет. Апла пулин те районри хăшпĕр колхозсенче лашасене йĕркеллĕ пăхмаççĕ. Çавна пула «Шăнкас», «Актив», «Первое мая», Буденный ячĕпе тăракан колхозсенче хăшпĕр лашасем вăйсăр, ырхан, вилнисем те пулнă.

Туртăм вăйĕ çителĕксĕр пулин те, чылай колхозсенче вăкăрсене тата сĕт паман ĕнесене ĕçе вĕрентесси сÿрĕк пулса пырать.

МТС ку тарана çитсе те горючипе сĕрмелли çусем хатĕрлесе çитермен, колхозсемпе договорсем туса пĕтермен.

Агротехника правилисене пурнăçа кĕртес ĕçре пĕлтĕр пулнă йăнăшсене халех шута илмелле те вĕсене пĕтермелле. «Иртсе кайсан — курмиш пул...» тесе шутлани йăнăш.

Республикăри малта пыракан районсем сурхи ĕçсене тума пуçларĕç. Анчах Шупашкар районĕ хатĕрленÿ ĕçĕсене хăçан туса çитерессшĕн-ши?

Г. ПЕТРОВ.

СССР Совнаркомĕнче

СССР Совнаркомĕ, тракторсене кĕркуннепе хĕлле тата 1944 çулхи март уйăхĕнче юсамалли плана пурнăçланипе пăхса тухса, **çапла йышăннă:**

1. Кĕркуннепе хĕлле тата 1944 çулхи март уйăхĕнче МТС-семпе совхозсен тракторĕсене юсамалли плана пурнăçланăшăн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавĕсене тата тракторсене юсанă çĕрте уйрăмах палăрнă работниксене премилемешкĕн 300.000-шар тенкĕлĕх премисене çаксене памалла тунă:

Курск облаçне
Орел облаçне
Бурят-Монгол АССР-не
Сталино облаçне (Украина)
Воронеж облаçне.

2. 1944 çулхи мартра тракторсене юсамалли плана çак республикăсемпе крайĕсем тата облаçсем иртерсе тултарнине палăртнă: Украина ССР-ĕ, Грузин ССР-ĕ, Таджик ССР-ĕ, Азербайджан ССР-ĕ, Армян ССР-ĕ, Краснодарпа Хабаровск крайĕсем, Мускав, Смоленск, Куйбышев, Чита облаçĕсем тата Удмурт АССР-ĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 21-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 21-мĕшĕнче СТАНИСЛАВ хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшманӑн йышлă пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă. Пирĕн чаçсем нимĕçсен 68 танкне пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 1.500 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ.

Апрелĕн 20-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 59 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 69 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ЭСТОНИРИ СЛАНЕЦ ЗАВОЧĔСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

Апрелĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Эстони ССР-ĕнчи **Кэхтла** чугун çул станцийĕпе **Куртна-Лагерь** посслокĕ патĕнчи сланец завочĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула завод территорийĕнче йышлă пушарсем тухнă, пушарсенче взрывсем пулнă. Куртна-Латерь посолокĕ патĕнчи сланец заводĕнче уйрăмах вăйлă взрывсем пулнă. Пушарсене пирĕн летчиксем 80 километртан курнă.

* * *

Станислав хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман атакисене сире-сире янă. Çĕр тĕттĕм пулнипе усă курса, нимĕçсем пирĕн çарсен тылне тухма хăтланнă, анчах та вĕсене пысăк сухатусем тÿстерсе каялла хăваласа янă. Ирхине çĕнĕ вăйсем илсен, тăшман наступлени пехотăпа тата танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсен йышлă вăйĕсене кĕртсе янă. Вара çав тери хаяр çапăçусем пуçланса кайнă, темиçе хутчен алă вĕççĕн те тытăçса çапăçнă. Пĕр участокра совет пехотинецĕсемпе артиллеристсем тăшманăн çичĕ контратакине сирсе янă. Гитлеровецсене пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ, вĕсен 16 танкĕне хăй тĕллĕн çÿрекен тупине, 4 бронемашинине тата 5 бронетранспортерне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр районра пирĕн танксене перекен артиллерин боецĕсемпе офицерĕсем паттăррăн çапăçнă. Вĕсем тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă çарĕсене вăйлăн пенĕ. Гитлеровецсен атакисене сирсе ярса, совет артиллеристĕсем нимĕçсен 52 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Çапла вара тăшман танксен йышлă вăйĕсемпе атакăласа пирĕн оборонăна татма хăтланни пăчланса ларнă. Нимĕçсен танксем хыççăн пынă пехотине çĕр çумне лапчăтса хунă, пысăк сухатусем тÿстернĕ, вара вăл хăйĕн малтанхи позицийĕсем патне чакнă.

Гварди подполковникĕ Ковшиков ертсе пыракан летчик-штурмовиксем, начар çанталăкра мăшăрăн-мăшăрăн кĕрешсе, тăшманăн чугун çулĕсене тата çарĕсене пыра-пыра çапнă. Совет летчикĕсем нимĕçсен темиçе танкне, 20 автомашинине, 2 паровозне, 25 вагонне пĕтерсе тăкнă, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Çурçĕрти флотăн авиацийĕ тăшман судниксен караванĕ çине бомбăсем пăрахнă, 2.000 тонна таякан транспорта, 2 мотобота тата хурал та çÿрекен пĕр катера шыва путарнă.

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн летчикĕсем Финн заливĕнче тăшманăн тральщикĕпе хуралта çÿрекен катерне шыва путарнă.

* * *

Львов облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ пĕр кун хушшинче нимĕçсен фронт патнелле каякан 3 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Крушенисенче 2 танк, 2 тупă çĕмĕрĕлнĕ тата 100 гитлеровец ытла вилнĕ. Молдаван партизанĕсен ушкăнĕ пĕр паха шоссе çулĕ çинчи пысăк кĕпере сирпĕнтерсе янă. Сирпĕнтерсе янă кĕпер умне тăшманăн автомашинисем нумай пырса капланнă. Партизансем, танксене пемелли пăшалсемпе персе, темиçе çăмăл тата грузовой автомашинăна стройран кăларнă.

* * *

Тарнополь хулинче нимĕç подполковникне Генрих Кайебурга тыткăна илнĕ. Вăл Тарнопольти гарнизонăн начальникĕн Нейдорф генерал-майорăн адъютанчĕ пулнă. Тыткăна лекнĕ подполковник çапла каласа панă: «Нейдорф генерал Тарнополе март уйăхĕн варринче килчĕ, вăл крепоçăн коменданчĕ пулнă Киттель генерал вырăнне ларчĕ. Нейдорф Гитлертан Тарнополь хулине кирек мĕн пулсан та хамăр алăра тытса тăма хушакан приказ илчĕ. Вырăс çарĕсем çавăрса илнĕ Тарнополь хулинчен эпир Гитлер патне çĕнĕ вăйсем ыйтса, радиограммăсем темиçе хут та ятăмăр. Пĕр радиограммăра Нейдорф çапăçура эпир пысăк çухатусем тÿсни çинчен каларĕ, нимĕç гарнизонĕн лару-тăрăвĕ пĕтĕмпех шанчăксăррине кăтартса пачĕ. Гитлер хăйĕн тепĕр радиограмминче каллех, нимĕ пăхмасăрах, Тарнополе хамăр алăра тытса тăма хушрĕ, пĕр салтак та юлмиччен çапăçма хушрĕ. Çав вăхăтрах вăл Нейдорфа пулăшма танксен йышлă вăйĕсем пыраççĕ тесе шантарчĕ. Темиçе кун иртсен, Гитлер Нейдорфа награда пачĕ. Генерал танксемпе салтаксем ярасса кĕтсе тăнă. Салтаксем вырăнне самолетпа рыцарь хĕресĕ ярса панă. Çав вăхăт тĕлне Тарнополь гарнизонĕ йĕркесĕрен тухнăччĕ, çарсен управленийĕ пĕтсе ларнăччĕ. Апрелĕн 15-мĕшĕнче Нейдорфа вĕлерчĕç. Çав кунах вара гарнизонăн юлашкийĕсем хĕçпăшалĕсене пăрахса тыткăна парăнчĕç. Тарнополь хулишĕн çапăçса, нимĕçсен темиçе пин салтакĕпе офицерĕ пĕтрĕ. Вĕсем вилнĕшĕн пĕтĕмпех Гитлер айăплă. Вăл пире ирсĕррĕн улталарĕ».

* * *

Волынь облаçĕнчи Чарторийск местечкине оккупацилесенех, нимĕçсем пурне те çаратма тата йышлăн вĕлерме тытăннă. Мирлĕ совет гражданĕсене Урочище Котелец сыхăнăвĕнче, масар хыçĕнчи варта, пере-пере вĕлернĕ. Нимĕçсем пуринчен ытла интеллигенцие хаяррăн тыткаланă. Вĕсем Гордий Свента учителе, хăйĕн 14 çулхи ывăлĕпе пĕрле, персе вĕлернĕ. Григорий Чеб учителе тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ. Январь уйăхĕн вĕçĕнче местечкăна эсэсовецсен отрячĕ пынă. Вăл местечкăри çынсене оборонăлла сооруженисем тума хăваласа кăларнă. Çав ĕçе туса пĕтерсен, фашистла нимĕç ирсĕрĕсем çавăнта ĕçленĕ мирлĕ совет гражданĕсене 400 çынна ытла персе вĕлернĕ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Аслă уява уйăхри задание 125 процент тултарнипе кĕтсе илетпĕр

Шупашкарти «Кооператор» артель май уявне апрель уйăхĕнчи задание 125 процент тултарнипе кĕтсе илет. Апрелĕн 20-мĕшĕ тĕлне уйăхри задание 80 процент ытла пурнăçланă.

Çак кунсенче эпир артельте атă-пушмаксене сĕрмелли хатĕрсем тума тытăнатпăр. Çавăн пекех химически цеха та ĕçе яратпăр.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртура столярнăй, тата турасем тăвакан цехсем малта пыраççĕ. Зверев, Пластинин мастерсем кашни кунах ĕç нормине 200—250 процент тултараççĕ.

А. КОЛБАСОВ,
«Кооператор» артель правленийĕн председателĕ.

Сменăри задание 800 процент пурнăçларĕ

КАНАШ, апрелĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводри рабочисемпе работницăсем май уявĕ умĕнхи ăмăртура пиххăçанхинчен те хастарлăрах ĕçлеççĕ. Жебрак юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри Стахевич юлташăн смени апрелĕн 21-мĕшĕнче сменăри задание 185 процент чухлĕ пурнăçларĕ. Мастер Головин юлташăн участокĕнче ĕçлекен парторг Остапец юлташ сменăри задание 450 процент, комсорг Севрюк 380 процент таран пурнăçларĕç. Çак сменăра ĕçлекен рабочисем Морачковскипе Ивко юлташсем сменăри задание 400-шер процент, Харламниди юлташ 800 процент тултарчĕç.

Завод коллективĕ апрель уйăхĕнчи заданине ăнăçлăн пурнăçлассишĕн ăмăртăва анлăн сарса, пĕтĕм вăя хурса ĕçлет.

В. ЖУРАВЛЕВ,
Заводри партбюро секретарĕ.

Фронтри пек хĕрÿ ĕçре

ЙĔПРЕÇ. Инвалидсен «Помощь» артель (правлени председателĕ Ларин юлташ) продукци кăлармалли задание уйăхран уйăхах ирттерсе тултарать. Темиçе уйăх ĕнтĕ вăл Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне хăйĕн аллинче тытса тăрать.

1944 çулхи пĕрремĕш квартал планне 143 процент пурнăçласа артель фронтпа çĕршыва планран ирттерсе темиçе пин тенкĕлĕх продукци пачĕ. Катка-пичке тăвакан, атă-пушмак çĕлекен, хăма çуракан цехсем апрель уйăхĕнчи задание 10 кун хушшинче 60 процента яхăн тултарчĕç.

Артельре ĕçлекенсен хастарлăхĕ пысăк. Сĕвĕ çĕлекен цех коллективĕ апрель уйăхĕнчи задание 15 кун хушшинче пурнăçлама пулчĕ. Ку цех март уйăхĕн планне 383 процент пурнăçланă. Паллă стахановецсем О. Петров, Р. Мальцева, С. Софронов юлташсем ĕç нормине тăтăшах ик-виçĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

П. КУРАКОВ.

Подсобнăй хуçалăхра тухăçлă тырпулпа пахча-çимĕç туса илессишĕн кĕрешетпĕр

1943 çулта Чебторг подсобнăй хуçалăхра вăйлă тырпулпа пахча-çимĕç туса илеймен. Пахча-çимĕç сахал туса илнин сăлтавĕ—çĕрпе тулли усă курма пĕлменнинче. Пĕлтĕр подсобнăй хуçалăхăн участокĕ çине тислĕкпе минераллă удобренисем тăкмалла пĕрех. Лартнă пахча-çимĕçсене пăхман. Вăхăтра çумламан. Пĕр сăмахпа каласан, агротехника ĕçĕсене туса пыман. Çавна пула ĕнтĕ вăйлă тырпулпа пахча-çимĕç туса илеймен.

Кăçал эпир, пĕлтĕр тунă йăнăшсене шута илсе, подсобнăй хуçалăхра çуракине тимлĕн хатĕрлентĕмĕр. Малтанах агротехника правилисене пурнăçа кĕртме тытăнтăмăр. Çак тĕлĕшпе подсобнăй хуçалăхра ялан ĕçлесе тăма сынсем уйăрттăмăр. Паянхи кун тĕлне хуçалăхра 58 çын ĕçлеççĕ.

Пирĕн кăçал 59 гектар çине тĕрлĕрен культурăсем акса хăвармалла. Халь пур культурăсем енĕпе те вăрлăхсем çителĕклĕ. 40 гектар çине пахча-çимĕç культурисем акатпăр. Паянхи куна 10 тонна ытла сĕвулми тăпри касса хатĕрленĕ. [illegible]

Агротехника ĕçĕсене эпир тĕпĕлĕн пурнăçлас тетпĕр. [illegible] 600 тонна тислĕк [illegible] Паянхи куна эпир 610 тонна тислĕк кăлартăмăр. Кунсăр пусне, 3 тонна кĕл, 1 тонна кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлерĕмĕр. [illegible] Тракторпа ĕçлеме 2 тонна горючи хатĕрленĕ. [illegible] Уйхир ĕçĕнче 6 лашапа [illegible]

ĕçлеме сынсем уйăрнă. Подсобнăй хуçалăхра ĕçлекенсем валли уйрăм столовăй уçатпăр.

Чебторг çумĕнчи подсобнăй хуçалăхра ĕçлекенсем Мускаври станоксем тăвакан Ленин орденлĕ «Красный пролетарий» завод коллективĕ чĕнсе каланине сÿтсе-явнă хыççăн, май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, подсобнăй хуçалăхра çуракки ĕçĕсене 12 кун хушшинче туса ирттерме, агротехникăна çирĕппĕн пăхăнса пыма, гектартан вăтамран 110 центнертан кая мар пахча-çимĕç туса илме сăмах пачĕç.

Мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем çине подсобнăй хуçалăхри рабочисем те хăйсен ĕçĕнче пысăк çитĕнÿсем тунипе ответлеççĕ. Кириллов юлташ ертсе пыракан бригада çуракине кăтартуллăн ирттерес тĕлĕшпе пур ĕçсене те туса çитернĕ. В. Васильева, Ю. Бабушкина юлташсем ирттен пуçласа каçченех подсобнăй хуçалăхра тухăçлăн ĕçлеççĕ. Кăçалхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе агроном Софронова юлташ тăрăнса ĕçленине те палăртмалла. [illegible]

[illegible] Чебторг 220 пин тĕп [illegible]

[illegible]

А. СУДАКОВ,
Чебторг директорĕ.

Çĕрулми çеçкисене ÿстерсе, вăрлăх выранне усă курар

Хăшпĕр колхозсенче нăçал çĕрулми вăрлăх çитмест. Çавăнпа та, [illegible] çĕрулми çеçкисене [illegible]

[illegible]

Агроном **А. ГРОМОВ.**

Комсомол активĕн пухăвĕсем

Çак кунсенче Шупашкарта комсомолăн хулари активĕн пухăвĕ ЦК ВЛКСМ 12-мĕш пленумĕн решенине — комсомолăн шкулти ĕçĕсене лайăхлатмалли мерăсем çинчен—сÿтсе-явре. Ку ыйтупа ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ А. Михайлов юлташ доклад туса пачĕ.

Пухура ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Еслюков, ВЛКСМ горкомĕн секретарĕ Ворначева, хулари çутĕç пайĕн заведующийĕ Кириллова юлташсем тата старши пионервожатăйсемпе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсем пулчĕç.

Доклад хыççăн 12 çын тухса калаçрĕç. Вĕсем комсомол организацийĕсем учительсен коллективĕнчен уйăрăлса тăнине критиклерĕç. комсомол организацийĕсем хăшпĕр чухне директорпа учительсем ертсе пыракан вĕренÿпе воспитани ĕçĕн тулăшĕнче юлни çинчен, шкул ĕçне лайăхлатма çителĕксĕр пулăшни çинчен каларĕç. Уйрăмăнах пионерсемпе ĕçлесси çителĕксĕр пулса пырать. Пионерсен сборĕсем час-часах кичемĕн иртеççĕ, пионерсем галстуксăр çÿреççĕ, сбора та галстуксăр пыраççĕ.

ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Еслюков юлташ комсомолăн хулари организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен каларĕ. Хулари Пионерсен суртĕн ĕçĕнчи çитменлĕхĕсене хытă критиклерĕ.

Пуху ВЛКСМ Центральный Комитечĕн 12-мĕш пленумĕ лартнă задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе практикăллă ĕçсем палăртрĕ.

* * *

ВĂРНАР, апрелĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Комсомол активĕн районри пухăвĕ икĕ ыйту: «Комсомолăн шкулти ĕçĕсене лайăхлатмалли мерăсем çинчен» тата «Комсомолăн ялсенчи сывăх вăхăтрах тумалли ĕçĕсем çинчен» сÿтсе-яврĕ.

Çак ыйтусемпе ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн шкулсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Токарев юлташ доклад турĕ.

Докладчик комсомолăн шкулсенчи организацийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклерĕ. Кив Мĕлĕмри 7 çул вĕренмелли шкулта вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайман ачасем нумай.

Уравăшри вăтам шкулта вĕренекенсем паянхи куна çитсе те шкул ачисен правилисене тĕрĕс ăнланса илеймен. Çавăнпа та ĕнтĕ шкул ачисем учительсене анчах пуç таяççĕ, шкула ытти çынсем пырсан: «вĕсем пирĕн учительсем мар вĕт» тесе асăрхамасăр иртсе каяççĕ, хăйсенчен асларахсене хисеплеме пĕлмеççĕ. Çавăн пекех кунта ачасене кино кăтартмалли йĕркесене те пăсаççĕ. Шкул ачисем учительсемсĕр пуçнех кинона çÿреççĕ, час-часах тапă плащадкисенче пулса кăшкăраша çÿреççĕ, табак туртаççĕ.

Çак фактсем вĕсем шкулсенчи комсомол организацийĕсем тата учительсем çамрăк ăрăва вĕрентессишĕн тата воспитани парассишĕн ответлăха туйса ĕçлемени çинчен калаççĕ.

Комсомол организацийĕ учителе пур майсемпе те пулăшса пыма, унăн авторитетне çĕклеме тивĕçлĕ.

Райçутĕç пайĕн инспекторĕ Молчанова хăшпĕр учительсем заочно вĕренĕве хакламанни çинчен каларĕ. Районĕпе 80 учительрен 43-шĕ çеç заочно вĕренеççĕ. Çавна пула вĕсем шкул ачисене таран пĕлÿ параймаççĕ. Учительсем час-часах уроксене хатĕрленмесĕр пыраççĕ. Пăртасри 7 çул вĕренмелли шкулта вырăс чĕлхипе вĕрентекен Михайлова юлташ йывăр сăмахсене тĕрĕс мар ăнлантарса парать.

Комсомолăн Сунарпуçĕнчи, Пăртасри, Рункăри çичĕ çул вĕренмелли шкулсенчи организацийĕсем учительсен идейăпа политикăллă пĕлĕвне тата вĕсен квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Комсомолец-учительсем хушшинче политика ыйтăвĕпе докладсем пачах ирттермеççĕ.

Вăрнарти вăтам шкулти старши пионервожатăй Соколова юлташ вожатăйсене пулăшасси çинчен чарăнса тăчĕ.

Çак ыйтусене сÿтсе-явнă çĕре ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Багров, райçутĕç пайĕн заведующийĕ Скворцов, райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Максимов юлташсем хутшăнчĕç. Çавăн пекех активра шкул директорĕсемпе учительсем, комсомолăн шкулсемпе колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсем пулчĕç.

Комсомол активĕн районри пухăвĕ ВЛКСМ шкулсемпе ялсенчи организацийĕсен ĕçне лайăхлатмалли мероприятисене палăртрĕ.

А. БЕЛЯЕВ,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

ВЛКСМ Ишлей райкомĕн пленумĕ

ИШЛЕЙ. Çак кунсенче кунта ВЛКСМ райкомĕн черетлĕ пленумĕ пулса иртрĕ. Унта ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XII-мĕш пленумĕн тата комсомол активĕн республикăри пухăвĕн итогĕсене сÿтсе-яврĕç.

«Комсомолăн шкулти ĕçĕсене лайăхлатмалли мерăсем çинчен» ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Н. Кузнецов юлташ доклад туса пачĕ.

Прение тухса калакансем комсомолăн шкулсенчи организацийĕсем начар ĕçлени çинчен чарăнса тăчĕç.

Райçутĕç пайĕн заведующийĕ Гатарин юлташ хăйĕн сăмахĕнче ВЛКСМ райкомĕ пионер организацисене ĕçре тивĕçлипе ертсе пыманни, çамрăк учительсем хушшинче сахал ĕçлени çинчен каларĕ. Хăшпĕр çĕрте çамрăк учительсем хăйсен ĕçĕсене тивĕçлипе туса пымаççĕ. Мартьянова (Етĕрнекассинчи пуçламĕш шкул) Маркова (Мишерти пуçламĕш шкул), Щукин (Салабайкассинчи пуçламĕш шкул) комсомолец-учительсем уроксене хатĕрленмесĕр пырса, плансăр ирттереççĕ.

Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсем хăйсем умĕнче тăракан задачăсене тивĕçлипе ăнланса илмен. Çамрăк учительсем хăйсен идейăллă тата политикăллă пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Комсомол организацийĕсем ячĕшĕн кăна шутланса тăраççĕ. Сăмахран, Ишек вăтам шкулĕнчи комсомол организацийĕ (секретарĕ О. Калинина) 1944 çулта пĕр пуху та ирттермен. Çавăн пекех Ишлей район центрĕнчи вăтам шкулта та (секретарĕ Брук) ĕçсем начар пыраççĕ.

«Комсомолăн ялсенчи сывăх вăхăтрах тумалли ĕçĕсем çинчен» ВЛКСМ райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ М. Бондарев юлташ доклад туса пачĕ. Комсомолăн хăшпĕр колхозсенчи организацийĕсем начар мар ĕçлеççĕ. «Красный плуг» колхозра (ВЛКСМ организацин секретарĕ Казакова юлташ) пухусене вăхăтра ирттереççĕ. Комсомол организацийĕ пуçарăвĕпе хĕрлĕ кĕтес организациленĕ. Драмкружок аван ĕçлет. Стена хаçачĕсем йĕркеллĕ тухса тăраççĕ. Колхоз правленийĕнче комсомолецсен дежурствине йĕркеленĕ. Вăрлăха мĕнле усранине сăнаса тăма комсомолецсен постне уйăрнă. «Знамя победы» колхозри комсомол организаци (секретарĕ Добросмыслова) пуçарăвĕпе агротехника кружокĕ организациленĕ. Унта акакансемпе сухалакансем те вĕренме çÿреççĕ. Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе комсомол организаци 4 хутчен воскресник ирттернĕ. Çав воскресниксенче çамрăксем кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата кĕл пухнă, уйра юр тытнă.

Кунпа пĕрлех пленум комсомолăн ялсенчи пуçламĕш организацийĕсен ĕçĕнче чылай çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Комсомолăн Мамкари тата Хачăкри пуçламĕш организацийĕсем вăрлăхсем тупас ĕçре колхозсене пулăшас тата туртăм вăйĕ хатĕрлес тĕлĕшпе питех те начар ĕçленĕ. Мамкари «Искра» колхозра лашасем нумай вилнĕ. Апла пулин те комсомолăн çак колхозри пуçламĕш организацийĕ ку ыйтăва пухусенче сÿтсе-явман.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Пядуганов юлташ районра вăйлă тырпул звенисен хисепне ÿстересси, комсомол организацисем колхозсен правленийĕсене ĕçре пулăшса тămалли çинчен, комсомолăн МТС-ри пуçламĕш организацийĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен чарăнса тăчĕ.

Пленум асăннă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Пĕтĕм Союзри колхоз çамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвне пĕр миллион çын ытла хутшăннă

ВЛКСМ-ăн Пушкăрт область организацийĕ мала тухнă

ЦК ВЛКСМ Пĕтĕм Союзри колхоз çамрăкĕсен пĕрремĕш йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртăва 1.124.228 çын хутшăннă. Вĕсенчен 60.000 çамрăкĕ колхозран 360.00 каччăпа хĕр ытла çар енĕпе йĕлтĕрпе çÿреме вĕренмелли 20—30 сехетлĕ программа тăрăх зачетсем панă тата 649.660 çын ГТО нормине панă.

Ăмăртура чи малти вырăна Пушкăрт АССР-ĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем тухнă. Иккĕмĕш вырăна Киров облаçĕ, виççĕмĕш вырăна Иркутск облаçĕ йышăннă. Ăмăртура мала тухнисене куçса çÿрекен приз-кĕмĕл кубок тата хисеплĕ грамота памалла тунă.

ЦК ВЛКСМ çак облаçсемпе крайсенче тата республикăсенче йĕлтĕрлĕ ăмăртăва лайăх организацилесе ирттернĕ тесе паллă тунă: Челябинск, Рязань, Горький, Куйбышев, Ленинград, Калинин тата Мускав облаçĕсенче. Чăваш АССР-нче, Мордва АССР-нче, Армян ССР-нче тата Красноярск крайĕнче. Колхозсенчи чи лайăх 10 командăна Хисеплĕ грамотăсем тата спорт инвентарĕн комплекчĕсене панă. Ăмăртура уйрăмах палăрнă 16 çамрăк колхознике грамотăсем тата парнесем парса наградăланă. (ТАСС).

Колхоз çамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕнче мала тухнисене наградăсем пани

Апрелĕн 20-мĕшĕнче СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорт комитечĕнче темиçе республикăри, облаçри тата районри комитетсен председателĕсем пухăннă. Колхоз çамрăкĕсен Пĕтĕм Союзĕпе ирттернĕ йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕн итогĕсене сÿтсе-явнă. Çав ăмăрту ялта йĕлтĕрлĕ спорта маларла сарма пулăшнă. Колхозсенче физкультурăн 7.400 çĕне коллективне тунă.

Ăмăртура çĕнтернисене — Пушкăрт республикипе Киров облаçĕнчи йĕлтĕрçĕсене — наградăсем панă.

Колхоз çамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕсене сулленех ирттерме йышăннă. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

Бадольо Италин çĕнĕ правительствине тунă

БАРИ, апрелĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Паян каçхине Бадольо маршал çĕнĕ правительство туни çинчен пĕлтернĕ. Çав правительствăна Италири фашизма хирĕç кĕрешекен 6 партин представителĕсем те кĕреççĕ. Премьер-министр Бадольо ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ те пулса тăрать.

Çар министрĕ Таддео Орландо генерал, çар адмиралĕ Де Куртен, авиаци генералĕ Сандалли хăйсен вырăнĕнчех юлаççĕ.

Правительствăра пилĕк министр портфельсĕр пулаççĕ. Бенедетто Кроче, граф Карло Сфорца, христиансен демократиллĕ партийĕн представителĕ Джулио ди Родино, коммунистсен партийĕн представителĕ Пальмиро Тольятти (Эрколи) тата социалист Пьетро Манчини.

Министрсене çаксене лартнă: шалти ĕçсен министрне — христиансен демократиллĕ партийĕн представительне Сальваторо Альдизиона; юстици министрне—либерала Виченцо Аранджо—Руиз профессора; обществăллă ĕçсен министрне—«действи партийĕн» представительне Альберто Таркиаяние; çĕрĕç министрне—Фаусто Гулло коммуниста, сутă йĕрсен министрне—«ĕç демократийĕ» партийĕн представительне Франческо Черабонăна; çутĕç министрне —«действи партийĕн» представительне Адольфо Омодео профессора; финанс министрне—Куинто Квинтиери банкира; промышленность, ĕç тата суту-илÿ министрне—Атилио ди Наполи социалиста лартнă.

Премьер-министр çумĕнчи статс-секратарь пулма Ренато Морелли либерала лартнă.

Министрсен заместителĕсене çаксене лартнă: çар министрĕн заместительне—Марио Палермо коммуниста; тинĕс министрĕн заместительне—Доминико Альберго социалиста; шалти ĕçсен министрĕн заместителĕсене — Николо Салерно социалиста тата «действи партийĕн» представительне Филиппо Карачоло князе; юстици министрĕн заместительне —«ĕç демократийĕ» партийĕн представительне Николо Ломбардона; обществăллă ĕçсен министрĕн заместительне—«ĕç демократийĕ» партийĕн представительне Адольфо Чилентона, çĕрĕç министрĕн заместительне—Марио Бергани либерала; сутă йĕрсен министрĕн заместителĕсене—ди Раймондо генерала тата Марио Фанона; çутĕç министрĕн заместительне—христиан демократĕсен представительне Анджело Джервазинине; финанс министрĕн заместительне—Антонио Пезенти коммуниста; промышленность, ĕç тата суту-илÿ министрĕн заместительне—христиансен демократиллĕ партийĕн представительне Франческо Сансонеттине лартнă.

ИТАЛИРИ ВĂРÇА ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: фронтăн нумай участокĕсенче минометсем тата артиллери персе тăнă. Пур фронтсенче те патрульсем кĕрешнĕ. Ĕнер союзниксен самолечĕсем тăшмана Италири объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕсри сывлăш-çар вăйĕсем кун каçиччен 2.000 вĕçеве яхăн тунă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Германири, Бельгири тата Францири чугун çул объекчĕсене тапăннă. Кунсăр пуçне, бомбардировщиксем Кельн хулине питĕ вăйлă тапăннă.

Англин авиаци министерствин тепĕр пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: апрелĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Германири, Бельгири тата Францири чугун çул узелĕсене тапăннă çĕре Англин 1.100 самолечĕ ытла хутшăннă.

«Москито» йышши самолетсем Берлина тапăннă.

Апрелĕн 20-мĕшĕнче, кăнтăрла иртсен, союзниксен бомбардировщикĕсен соединенийĕсем Сурçĕр Францири çар объекчĕсене атакăланă.

МИХАЙЛОВИЧ ЧЕТНИКĔСЕМ НЕДИЧЕВСЕМПЕ ПĔРЛЕ ЮГОСЛАВИ ПАТРИОЧĔСЕНЕ ХИРĔÇ КĔРЕШЕÇÇĔ

СТАМБУЛ, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Недичăн хăраса ÿкнĕ шайкки Сербире Югослави патриочĕсене хирĕç кĕрешме халăха хирĕç лыракан пур вăйсене те, пуринчен ытла Михайлович четникĕсене, мобилизацилеме пĕтĕм вăйпа тăрăшать. Недич хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Недич отрячĕсем (вĕсене «государство хуралçисем» тесе ят панă) четниксемпе пĕрле килĕштерсе ĕçлени аслăланнăçемĕн аслăланса пырать. Çапла, Белградра тухакан «Ново време» хаçат апрелĕн 4-мĕшĕнче Недичăн чĕнсе каланă сăмахне пичетленĕ. Унта Гитлер тарçи çапла калать: четниксемпе недичевсем патриотсене хирĕç пĕрпĕрне «алла-аллăн тытăнса», «тăван пиччĕсем пек» кĕрешеççĕ, тет. Унта тата çакăн пек каланă вырăн пур: Недич отрячĕсемпе четниксем халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çара хирĕç тăвакан пур операцисене те пĕр центртан ертсе пыраççĕ, тенĕ.

ГИММЛЕР «ШАНЧĂКСĂР» ОФИЦЕРСЕНЕ ХИРĔÇ МЕРĂСЕМ ЙЫШĂНАТЬ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Афтонбладет» хаçатăн Бернри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: илнĕ хыпарсем тăрăх, Гиммлер Гитлера çапла каланă: Германи çарĕнчи офицерсем нумайĕшĕ çарăн тăшмана хирĕç тăрас хăватне хавшатаççĕ, çавăнпа офицерсене «вĕсем политика енчен мĕн чухлĕ шанчăклине» тĕрĕслесе тухмалла, тенĕ. Çавăн хыççăн вара часах Берлин сывăхĕнче «итлесшĕн пулман офицерсем» валли концентрациллĕ лагерь туса хунă. Берлинра тата офицерсен ĕçне пăхма уйрăм суд тунă. Çав суд офицерсен ĕçĕсене кашни кунах пăхать. Унăн ларăвĕсенче час-часах Гиммлер та пулать. Судьясен виç чĕрĕк пайĕ—СС представителĕсем.

ГЕРМАНИ АГЕНТСТВИН АНКАРАРИ ОТДЕЛЕНИЙĔН РУКОВОДИТЕЛĔ ГЕРМАНИЕ КАЙМА КИЛĔШМЕН

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: кунта килнĕ хыпарсем тăрăх, Германин информаци бюровĕн Анкарари отделенийĕн руководителĕ Германие таврăнма килĕшмен. вăл Турци влаçĕсене хăйне политикăллă эмигрант шучĕпе Турцирех пулăнма ирĕк пама ыйтнă.

ТУРЦИ ХРОМ РУДИНЕ ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЕ ЯМА ЧАРНИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, апрелĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин дипломатиллĕ ĕçсем çинчен çыракан сотрудникĕ Рендел Нил çапла çырать: Турци правительстви хром рудине ют çĕршывсене яма чарăнни Германин ют çĕршывсенчен илсе тăракан хромне сахалтан та çурри чухлĕ чакарать. Çав хром вăл броня валли хăйне уйрăм йышши хурçă хатĕрленĕ çĕре каять. Германи ĕнтĕ Югославипе Грецири рудниксенчен çеç хром илсе тăма пултарать. Анчах та унтан хром руди илсе тăма Югослави тата Греци партизанĕсем кансĕрлеççĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Таймс» хаçат хăйĕн редакцийĕ çырнă статьинче çапла калать: Турци хром рудине ют çĕршывсене яма чарăнни пĕрлешÿллĕ нацисене сиен тумасть, мĕншĕн тесен вĕсен хром нумай, анчах та вăл Германие хăйĕн çар производствине халлĕхи шайра тытса тăма питĕ кирлĕ материалсăр тăратса хăварать.

Хаçат тата çакна палăртать: хром пирки йышăннă решени ытти результатсем те памалла. Вăрçа хутшăнман çĕршывсем хăйсем Германипе экономика тĕлĕшĕнчен çыхăнса тăрас ыйтăва тепĕр хут пăхса тухмалли вăхăт çитнĕ ĕнтĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçатăн дипломатиллĕ ĕçсем çинчен çыракан сотрудникĕ çапла калать: хром вăл Турци Германие тăратакан пĕртен-пĕр тавар мар. «Вăл — чи кирлĕ тавар пулса тăрать, анчах та союзниксем хăйсен нотисенче тата çакăн çинчен те каланăччĕ: Германие çĕрмамăкĕ, çăм, пăхăр тата тир парса тăни Германин çар машинине усă кÿрет, тенĕччĕ».

«ДЕЙЛИ МИРОР» ХАÇАТ ÇАРА КАИЧЧЕН ХĔВЕЛАНĂÇ УКРАИНĂПА БЕЛОРУССИРЕ ПУРĂННА ПОЛЯК САЛТАКĔСЕН КУНÇУЛĔ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли Мирор» хаçат пĕрремĕш страницăра çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă: çара кайиччен Хĕвеланăç Украинăпа Белоруссире пурăннă 30 поляк салтакне, поляксен çарĕн командованийĕ арестленĕскерсене, çак эрнере çар трибуналĕ умне тăратаççĕ. «Çав салтаксем,—тесе çырать хаçат,—вĕсене поляксен çарĕнче хĕстерни, хăратни, хĕнени çинчен калаççĕ. Поляк офицерĕсем çапла калаççĕ: сире, ют çĕршыв салтакĕсене, поляксен çарĕнчи салтаксен, кирлĕ пулсан, вырăссене хирĕç кĕрешме хатĕр пулмаллипе ăнлантма вĕрентмелле, теççĕ.

АТĂЛ ÇИНЧЕ

Юлашки икĕ талăк хушшинче, çанталăк сивĕрех тăнă пирки, Атăл шывĕ пурĕ те 9 сантиметр кăна хутшăннă. Атăл пăртан тасалса пĕтнĕ.

Сывлăшри температура 0,5 градус ăшă, шывăн температури 1,9 градус ăшă

Пĕлтерÿ

Апрелĕн 24-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕнче (Чувашски ур., 6) агитколлективсен руководителĕсемпе докладчиксем тата беседчиксем валли çак темăпа инструктивлĕ доклад пулать: **«Майăн 1-мĕшĕ —фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешекен мĕнпур тĕнчери ĕççыннисен вăйĕсене пăхса тухмалли кун».**

Докладчик — ВКП(б) горкомĕн лекторĕ Бурнова юлташ.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00104 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.